«Халăх тăрăшнипе, патшалăх пулăшнипе»

# Турай тăрăхĕ хăтлăрах та илемлĕрех пулĕ



Çуткӳл.



Техника валли ĕç çителĕклĕ.

**Пуçарулăх бюджечĕн программипе усă курса Турай территори пайĕнче** кăçал 6 проект пурнăçа кĕртеççĕ.

**Пĕрремĕш проект** – Çуткӳл патĕнчи территорие тирпейлесе хăт кĕртесси, кану вырăнĕ йĕркелесси.

**Иккĕмĕш проект** – Çуткӳл ялĕнчи Нагорная урамри çула вак чул сарса хытарасси.

**Виççĕмĕш проект** Уйкас Турай ялĕнче пурнăçланать. Кунта ача-пăча площадки тавра карта тытма шутланă.

**Тăваттăмĕш проект** харăсах икĕ яла пырса тивет. Çулав ялĕнчи Школьная тата Садовая урамсенчи тата Турай салинчи Садовая урамри шыв пăрăхĕсен тытăмне юсаса çĕнетеççĕ.

**Пиллĕкмĕш проект** Анаткасси ялĕнчи Овражная тата Березовая урамсенчи çула вак чул сарса хытарассипе çыхăннă.

**Улттăмĕш проект** Тушкасси ялĕнче пурнăçланать. Кунта Мартынов, Вологодский урамĕсенче тата Садовая урамри çула вак чул сарса хытараççĕ.

Çак ӳкерчĕке тӳрех куç умне кăларсан Турай тăрăхĕнче «ĕмĕтри стройка» пырать темелле. Халăх пуçарулăхĕ вырăнти пурнăçа хăтлăрах тăвас тĕллевпе çыхăннă. Çул, шыв – ял çыннин пурнăçĕнче пысăк пĕлтерĕшлĕ енсем пулса тăраççĕ.

Турай тăрăхĕ шывпа пуян. Кунта Муркаш округĕнчи чи пысăк плотина тата карст мелĕпе йĕркеленнĕ Чăваш Енри чи тарăн кӳлĕ – Çуткӳл – пур. Сăмах май, вăл Азов кӳллинчен те тарăнрах. Çуткӳл пирки тĕрлĕ çĕрте 14,8 метр тарăнăш тесе çырса хунă пулсан, ун патĕнче пурăнакансем ăна 16,5 метр тарăнăш теççĕ. Пулăçсем вара шыв тарăнăшне палăртмалли приборсем кунта 18,5 м тесе кăтартнине калаççĕ.

Пуçарулăх бюджечĕн мелĕпе пурнăçлакан проектсенчен пĕри шăпах Çуткӳл патĕнче тирпейилем тата хăт кĕртессипе çыхăннă. Ку ĕçе пурнăçлама 1 млн та 664 пин тенкĕ кирлĕ, ял çыннисен тӳпи 166 пин ытла тенкĕпе танлашать.

Кунта кӳлĕн пĕр пусне темиçе çул каяллах татса кайнă, çулсеренех çуркуннепе шыв тулнă май, çав таталнă вырăн тарăнлансах пынă. Çапла вара кӳлĕн типсе пынă çыранĕсене тимлĕ пăхсан кунта шыв самаях анни палăрать.

Халĕ шăпах çав типнĕ вырăнта тăршшĕпех ӳссе ларнă йывăç-тĕмсене тасатса кӳлĕн икĕ пуçне те хăйăр сарса, канмалли вырăнсем йĕркелеме шутланă. Паллах, кӳлĕ пуçне те сарлакалатса, пăрăхсем хурса хăварса çирĕплетеççĕ.

Кунта ĕçсем пуçланнă, кӳлĕ хĕрринче йывăç хунавĕсене, тĕмсене касса тухнă, мĕншĕн тесен кӳлĕ пуçне çирĕплетнĕ хыççăн кунта шыв икĕ метра яхăн хăпармалла. Çапла вара йывăç-тĕмсем те шыв айне пулса юлĕç. Нумаях пулмасть çунă вăйлă çумăрсем хыççăн та шыв хăвăрт хăпарнă – çур метра яхăн. Ĕçсене вĕçленĕ хыççăн кӳлле шыв тулса çитсен унăн тарăнăшне тепĕр хут виççе пăхасшăн.

Турай территори пайĕн пуçлăхĕ Евгений Орлов пĕлтернĕ тăрăх, Çуткӳл ялĕнче хальхи вăхăтра 84 кил хуçалăхĕ шутланать, 68 çын пурăнать.

– Ялти халăх кӳлĕ таврашне тахçанах тирпейлесшĕнччĕ, тасатасшăнччĕ. Халăх хывмалли вунă процента Павел Колесников предприниматель хăй çине илчĕ. Кунта чи малтанах дамбăна çирĕплетмелли çинчен калаçу пулчĕ, мĕншĕн тесен шыв çĕре çурсах пыратчĕ. Малтан кӳлĕ пуçĕ ансăрччĕ, тепĕр енне машинăпа та каçса çӳреймен. Халĕ çак вырăн сахалтан та 20 м сарлакăш пулмалла тата çӳллĕшне те хăпартмалла. Çапла вара шыв та 1,8 – 2 м çӳллĕш хăпармалла. Кӳлĕ пуçĕнче малтан пăрăх пулман. Çавăнпа та çурхи шыв тулсассăн вăл çав кӳлĕ пуçĕ урлă юхма пуçлатчĕ, татса кайнин сăлтавĕ çавăнта пулнă. Пăрăх хурса хăварсан кун пек пулмалла мар. Пляж пек вырăн йĕркелеме хăйăр сарасшăн кунта. Лармалли вырăнсем тума палăртнă, ачасене выляма ятарлă вырăнсем – хăйăр лаптăкĕсем – пулмалла. Çакăн пек вырăн кӳлĕ хĕрринче хурăнсем ӳсекен енче те йĕркелесшĕн, – каласа пачĕ Евгений Орлов.

Вырăнĕ илемлĕ, кӳлĕ çине кашни çул тенĕ пекех шурă акăшсем анса лараççĕ, вĕсем пĕр вăхăт кунта пурăнаççĕ. Ытти чухне вара кунта кайăк-кăвакалсем ишеççĕ. Вырăнĕ чăнах та илĕртӳллĕ. Проекта мĕн палăртнине туса çитерсен канакансем те, тен ялти пушă кил-çурта туянса пурăнма тытăнас текенсем те пулĕç...

Çулав ялĕнчи Школьная тата Садовая урамсенче тата Турай салинчи Садовая урамра шыв пăрăхĕсене юсаса çĕнетессин проектне те вăхăтрах пурнăçларĕç. Ĕçе пурнăçлама 3 млн та 133 пин ытла тенкĕ кирлĕ пулнă, çынсем пухнă укçа сумми 133 пин ытла тенкĕпе танлашнă. Çулав ялĕнче пурăнакансем, сăмахран, килĕрен 15-шер пин тенкĕ укçа пухнă. Кунти Школьная урама çитсе килнĕ май, пăрăхсене хурса хăварнине курма пулчĕ – 1 км ытла.

Муркаш муниципалитет округ пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ Андрей Мясников пĕлтернĕ тăрăх, пуçарулăх бюджечĕн мелĕпе усă курса кăçал шыв пăрăхĕсене пурĕ 12 км 800 метр çĕнетсе юсама палăртнă. Пĕлтĕр çулталăк тăршшĕпе пуçарулăх бюджечĕн программипе усă курса ялсенче пурĕ 48 км тăршшĕ шыв пăрăхĕсене юсаса çĕнетнĕ, çĕннисене хурса хăварнă, 26 шыв башни юсанă. Çак цифрăсенче ял çынни хăйĕн пурнăçне лайăххах тăвас тесе тăрăшни курăнать те ĕнтĕ. Патшалăх пуçаруллисене пулăшнă чухне, паллах, ку программăпа усă курмалла.

# Муркаш тăрăхĕнче ĕç вĕрет



Çĕньял Муркашри пĕвене тасатаççĕ.

**Муркаш территори пайĕнче** кăçал 4 проектпа ĕçлеççĕ.

**Пĕрремĕшĕ** – Муркаш салинчи Комсомол площадĕнчи («Сывлăх» спорт шкулĕ хыçĕнчи) пĕвене тасатассипе. Кунти ĕçсене вĕçленĕ. Муркаш территори пайĕн пуçлăхĕ Алексей Кириллов проектпа пурнăçланă ĕçе йышăннине пĕлтерчĕ.

**Тепĕр проекчĕ** Муркашри Гагарин урамĕнчи 2-мĕш çурт умĕнче автомашинăсем валли вырăн тăвассипе çыхăннă. Палăртса хăвармалла, çак икĕ проекта пурнăçлама та халăх хывакан укçа-тенкĕ суммине предпринимательсен тӳпи пысăк. Ку проектпа пурнăçламалли ĕçсене вĕçленĕ, хальлĕхе вĕсене йышăнас тапхăр пырать.

**Виççĕмĕш проекта** Малиновка ялĕнче пурнăçлаççĕ. Кунта та ял халăхĕ пĕве тасатма шутланă. Контракт килĕшĕвĕпе пăхса хунă тăрăх подрядчикăн Малиновка ялĕнче ĕçсене сентябрьччен вĕçлемелле.

**Тăваттăмĕшĕ** – Çĕньял Муркашри Северная урамри пĕвене тасатасси. Сметăпа пăхса хунă тăрăх проект хакĕ 1 млн та 482 пин ытла тенкĕ. Халăх тӳпи – 148 пин тенке яхăн. Пĕве тасатас ĕç малалла пырать.

# Апашсем те пуçарullă



Исетерккĕре подрядчикăн ĕçне тĕрĕслеççĕ.

**Чуманкасси территори пайĕнче** 4 проектпа тимлеççĕ.

**Пĕрремĕшĕ** – Чуманкасси салинчи Советская урамри (Пачкасси ялĕ) пĕвене тасатасси тата пĕве пуçне çирĕплетесси. Çак ĕçе пурнăçлама 1 млн тенке майлă кирлĕ. Çынсем 100 пин тенке майлă хăйсен тӳпине хывнă. Чуманкасси территори пайĕн пуçлăхĕ Николай Белов проектпа палăртнă ĕçе вĕçленине пĕлтерчĕ.

**Иккĕмĕш проект** Якаткасси ялĕнче пурнăçланмалла. Кунта та ял çыннисем пĕве тасатса унăн çыранне çирĕплетме шутланă. Проект хакĕ 1 млн та 500 пин тенке майлă, ял халăхĕ 150 пин тенке яхăн пухнă.

**Виççĕмĕш проекта** Исетерккĕ ялĕнче пурнăçлаççĕ. Ял халăхĕ пĕве пуçне çирĕплетес шухăшлă. Ĕçе пурнăçлама 249 пин тенке майлă кирлине палăртнă, çынсем пухнă укçа сумми – 30 пин тенке майлă. Пĕве пуçне юсас ĕçе вĕçленĕ.

**Тăваттăмĕш проект** та çак ялтах пурнăçланмалла. Вăл пĕве тасатассипе çыхăннă. Ку ĕçе пурнăçлама 1 млн та 500 пин ытла тенкĕ кирлине палăртнă. Çынсем 150 пин тенке майлă хăйсен тӳпине хывнă.

Контракт килĕшĕвĕсемпе килĕшӳллĕн пур проекта та вăхăтра пурнăçласси куçкĕрет.

**Наталия НИКОЛАЕВА.**

**Проект Чăваш Ен Цифра министерстви пулăшнипе пурнăçланать.**